# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

## Ял çыннисем те хăтлăрах пурăнма тытăнаççĕ

**Паллă ĕнтĕ, кирек епле наци проектне илес пулсан та, чи малтанах вăл çынсен кулленхи ыйтăвĕсене татса парассипе, вĕсен пурнăç условийĕсене меллĕрех те хăтлăрах тăвассипе çыхăннă. «Жилье и городская среда» наци проекчĕ шайĕнче пурнăçа кĕртме вара федерацин тата регионăн виçĕ проектне туса хатĕрленĕ. Вĕсенчен пĕри – «Формирование комфортной городской среды» проект. Вăл хăйĕн тĕллевĕсемпе задачисене хăех уçса парать – ку вăл çынсене хăтлăрах условисенче пурăнмалла тăвасси. Кунта сăмахсен пĕлтерĕшне анлăрах ăнланни кирлĕ. «Формирование комфортной городской среды» тени хула çыннисене кăна мар, ял çыннисене те тÿрремĕнех пырса тивет. Унăн шайĕнче хуласенче пурăнакансем валли çеç мар, ял çыннисем валли те хăтлăх ĕçĕсене калăпăшлă туса ирттереççĕ.**

**Кăçал районта туса ирттерекен çак хăтлăх ĕçĕсем пирки район администрацийĕн капиталлă строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пайĕн тĕп эксперт специалистне Анастасия СУВОРОВĂНА каласа пама ыйтрăмăр.**

**– Анастасия Александровна, район центрĕнче пулнă май, Çĕнтерÿ паркĕнче юсав ĕçĕсем пуçăннине ытларахăшĕ асăрханă ĕнтĕ. Кунти ĕçсем наци проекчĕ шайĕнче пурнăçланаççĕ пулĕ?**

– Шăпах çапла. «Жилье и городская среда» наци проекчĕ шайĕнчи «Формирование комфортной городской среды» регион проекчĕпе килĕшÿллĕн Муркашри «Çĕнтерÿ паркĕ» обществăлла территорире кăçал калăпăшлă юсав ĕçĕсем туса ирттерме палăртнă. Хăтлăх ĕçĕсене пĕтĕмĕшле 7 млн ытла тенкĕлĕх туса ирттермелле. Вăл шутран 6 млн та 937 пин тенкĕне яхăн – федераци укçи. Подряд организацийĕ – «НПП «Наследие» ООО ĕçсене тытăннă ĕнтĕ.

Çавна та каласа хăварас пулать. Кăçалхи ĕçсене асăннă объектра пĕрремĕш тапхăр шайĕнче туса ирттереççĕ. Лăпкă кану зонине, мемориалсен площадкине йĕркелеме, хальхи мемориалсен тата «Салтак» палăкăн никĕсне юсаса йĕркене кĕртме, электричество хунарĕсем вырнаçтарса территорие çутатса тăрассине йĕркелеме, парка симĕслентерме палăртнă. Хăтлăх ĕçĕсене асăннă объектра çитес çул та туса ирттерме пăхнă. Ĕçсен калăпăшĕ кăçалхинчен кая пулмалла мар.

**– Çавна та ыйтса пĕлес кăмăл пур. Апрель уйăхĕнче сирĕнпе йĕркеленĕ калаçура «Формирование комфортной городской среды» проект шайĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2019 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнчи указĕпе пăхнă ĕçсем пирки сăмах пуçарнăччĕ. 9 ял тăрăхĕн территорийĕнчи 25 объектра хăтлăх ĕçĕсем туса ирттерме района республикăран 39 млн тенкĕ уйăрса парасси пирки сăмах пыратчĕ. Кайрантарах республикипе çав тĕллевпе уйăрма пăхнă укça-тенкĕн пĕр пайне килти хуçалăхра ĕне тытса усракан ял çыннисене субсиди парса пулăшма йышăну турĕç. Çакă вăл пирĕн района та пырса тивет пулĕ? Апла пулсан халĕ проект шайĕнче районта мĕнле ĕçсем туса ирттересси, мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрасси пирки сăмах пырать-ши?**

– Кунта тÿрех çавна каласа хăварас пулать. Ĕне усракансене пулăшупа тивĕçтерме нумай хваттерлĕ çуртсем таврашĕнчи территорисене тирпей-хăт кĕртме кăçал уйăрма пăхнă, анчах контракт туман объектсемпе çыхăннă укça-тенкĕне уйăрнă. Мĕншĕн тесен укça-тенкĕ усă курмасăрах юлма пултарнă. Асăннă сумма республикипе 185 млн тенкĕпе танлашать. Тирпейлĕхпе хăтлăх ĕçĕсем вара кăçалхи çулпа чарăнса лармĕç, вĕсем малашне те пулса пырĕç. Çавăнпа та нумай хваттерлĕ çуртсем таврашĕнчи территорисене тирпейлесе хăт кĕртес ĕçсем çитес çулсенче пулмĕç тесе пăлханма кирлĕ мар. Вырăнти пуçлăхсене вара малашне васкаварлăрах та яваплăрах пулма кăна сĕнмелли юлать.

«Формирование комфортной городской среды» проект шайĕнче кăçал çавăн пекех Ильинка ял тăрăхĕнчи Тренккäри Новая урамри нумай хваттерлĕ 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш тата 4-мĕш çуртсем патĕнчи территорие хăт кĕртмелле пулать. Ĕçсене «КЕРМЕН» ООО пурнăçлать. Муниципалитет контракчĕпе палăртнă тăрăх, пĕтĕмĕшле 2 млн та 337 пин тенкĕлĕх ĕç пурнăçламалла. Ку шутра ача-пăча тата спорт площадки йĕркелĕç, тротуар сарĕç, территорие симĕслентерĕç, çĕрлехи вăхăтра çутатса тăмалла тăвĕç. Кирлĕ укça-тенкĕн ытларах пайне – 2 млн та 197 пин тенкĕ – республика уйăрать.

Мăн Сĕнтĕр ялĕнче те Новая урам пур. Ку урамра вырнаçнă нумай хваттерлĕ 32-мĕшпе 34-мĕш çуртсем патĕнчи территорире те хăтлăх ĕçĕсем туса ирттерме пăхса хунă. Ача-пăча площадки тумалла, территорие симĕслентермелле тата çĕрле çутатса тăмалла тумалла. Ĕçсен подрядчикĕ – М.В. Павлов уйрăм предприниматель. Кунта та контрактпа пăхнă 1 млн та 109 пин тенкĕрен 1 млн та 43 пин тенкине республика бюджетĕнчен уйăраççĕ. Ытти сумма – вырăнти бюджет укçи-тенки тата ку тăрăхра пурăнакансем 1 процент шучĕпе хайсем пухни.

Хăтлăх ĕçĕсене çитес çула куçарнă объектсем сахалах мар. Кун пек объектсем Оринин, Йÿçкасси, Чуманкасси, Çатракасси, Муркаш, Мăн Сĕнтĕр, Ярославка, Ярапайкасси ял тăрăхĕсенче пур. Пĕтĕмĕшле вара районĕпе çитес çул «Формирование комфортной городской среды» проект шайĕнче, малтанласа палăртнă тăрăх, 52 млн ытла тенкĕлĕх ĕç туса ирттерме палăртатпăр. Апла пулсан эпир пурăнакан вырăн малашне татах хăтлăрах та илемлĕрех пулĕ.

*Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.*

Эсир ыйтнăччĕ

## Иртен-çÿрене ан шанăр

**Пирĕн пата Муркаш районĕнчи ялсенче пурăнакансенчен çырусем пулкаларĕç. Акă мĕн çырать Сергей Петров: «Иккĕмĕш кун ĕнтĕ Кăпас ялĕнче темĕнле специалистсем çÿреççĕ. Электричество счетчикне урам енне кăларса пама тата ăна юпа çинчи электричество линийĕпе кабельпе сыпăнтарса пама сĕнеççĕ. Çавăншăн 8500 – 9000 тенкĕ ыйтаççĕ. Çак ĕçсене Шупашкарти энергосбыт компанийĕн специалисчĕсемех пурнăçлаççĕ-и е кусем вĕсем пенсионерсене улталакансем кăна?»**

Асăннă тĕслĕх пирки çавна каласшăн. Кун пек услугăсемпе энергосбыт компанийĕ чăннипех те тивĕçтерет. Анчах та пирĕн компани специалисчĕсем çак ĕçсене гражданссемпе килĕшÿ тунă хыççăн кăна пурнăçлаççĕ. Услугăсемшĕн компани уйрăмĕн касси урлă тÿлемелле пулать тата пирĕн специалистсен хăçан пымалли пирки унччен калаçса татăлмалла. Çак вăхăта Муркаш районĕнчи Кăпас ялĕнче пирĕн специалистсем нимĕнле ĕç те пурнăçламаççĕ.

«Хамăрăн потребительсене, уйрăмах вара ватă çынсене татах тепĕр хут асăрхаттарса хăварасшăн. Счетчик улăштарасси пирки йышăну тăвиччен маларах лайăххăн шухăшласа пăхăр. Темĕнле организацисем гражданссене йĕркеллĕ ĕçлекен, законодательствăн мĕн пур требованийĕсене тивĕçтерекен счетчиксенех улăштарса панă тĕслĕхсем пур», – каласа парать Шупашкарти энергосбыт компанийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи уйрăмĕн директорĕ Сергей Бандурин.

Республикăра пурăнакансене çавна пĕлтересшĕн. Шупашкарти энергосбыт компанийĕн ĕçченĕсен хăйсемпе пĕрле яланах организаци пичечĕпе çирĕплетнĕ служба удостоверенийĕ пур. Çитменнине энергосбыт компанийĕн сотрудникĕсем çынсенчен укçана алăран нихăçан та илмеççĕ, расчетсене пĕтĕмпех касса урлă туса ирттереççĕ. Учет приборĕсене тĕрĕслеттермелли е улăштармалли вăхăчĕ пирки лармĕк клиентсем хĕрÿ линийĕн телефонĕпе (8-8352-36-80-03) е компани уйрăмне шăнкăравласа пĕлме пултараççĕ.

**Л. АЛЕКСАНДРОВА,**
**«Чувашская энергосбытовая компания» АО пресс-секретарĕ.**

Спорт хыпарĕ

## Пирĕн районта – тепĕр спорт мастерĕ

**РФ спорт министрĕ Олег Матыцин июнĕн 30-мĕшĕнче «Мастер спорта России» ята тивĕçни çинчен калакан хушăва алă пуснă.**

Унпа килĕшÿллĕн çĕршывăн спорт мастерĕсен йышне Чăваш Енри 5 спортсмен кĕнĕ.

Вĕсен шутĕнче Муркаш районĕнче пурăнакан Илья Паргеев та пур. Тĕревпе хусканусен аппарачĕ сусăрăннисен спортĕнче вăл юлашки çулсенче пысăк çитĕнÿсем тума пултарчĕ. Пирĕн ентеш парабадминтонра Европа чемпионачĕн 2018 çулти тата Пĕтĕм тĕнчери ăмăртăвăн 2019 çулти бронза призерĕ пулма тивĕçрĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Район судĕнчен

## Çул урлă каçма тăнă та...

А. Ярусова судья ертсе пынипе, патшалăх айăплавçи – район прокурорĕн çумĕ Ю. Семенов хутшăннипе Вязники хулинчи арçын тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕç пăхса тухрĕç. Вăл РФ Уголовлă кодексĕн 264 статйин 3 пайĕпе пăхнă йĕркене пăснине çирĕплетме сăлтав çителĕклĕ.

Иртнĕ çулхи кĕркунне асăннă çын «Скания» автомашинăпа тата çурма прицеппа ăмăрлă çанталăкра йĕпе асфальт тăрăх М7 автоçулпа пысăк мар хăвăртлăхпа Юнкă ялĕ çывăхĕпе пынă. Унăн кăтартăвĕ тăрăх, вăл ун чухне руль умĕнче тăватă сехетрен ытла пулман, хăйне лайăх туйнă, юраман препаратсемпе усă курман, хăвăртлăх 60 километртан ытла пулман.

Çавăн чухне водителе хирĕç фура иртсе кайнă, кĕтмен çĕртен çав машина хыçĕпе, çуран каçмалли ятарлă вырăнпа мар, ахаль çĕртен каçакан çуран çын курăннă. Ун чухне вĕсем хушшинче 8 метр шайĕнче кăна юлнă. Çынна çапса каясран асăрханнипе водитель тепĕр йĕр çине тухса кайма тытăннă. Пысăк автомашинăна вара çийĕнчех чарма май килмен. Тормоз çине хăвăртттăн пусни, сигнал пани тинех пулăшман, автомашина çуран çын çине пырса кĕнипе ăна çул айккинелле ывăтса янă, кĕлетки-çурăмне йăлтах амантса пĕтернĕ.

Машина чарăнсан водитель кабинăран хăвăрттăн тухнă та васкавлă пулăшăва чĕннĕ, куракансем те чупса пынă. Вăл каланă тăрăх, аманнă çыннăн пульсне тытса пăхнă чухне унран эрех шăрши кĕнĕ. Васкавлă пулăшу çитсен çуран çын вилнине çирĕплетнĕ.

Вăл каланă тăрăх, пысăк тиевсем турттарассипе ĕçленĕ, унăн водитель стажĕ 2000 çултанпа пулнă. Водитель хăйĕн айăпне туллин йышăннă. Вăл мораль тĕлĕшпе сиен кÿнишĕн вилнĕ çыннăн çывăх çыннине 100 000 тенкĕ тÿлесе саплаштарнă.

Район сучĕн приговорĕ тăрăх, айăплă çынна транспортпа çÿрессине икĕ çуллăха чарнă, пĕр çул та ултă уйăхлăх условлă тĕрĕслев вăхăчĕ панă, çавăн пекех ун тĕлĕшпе ытти йĕрке те çирĕплетнĕ.

Приговор июнĕн 9-мĕшĕнче саккунлă вăя кĕнĕ.

Çул çинче уйрăмах çуран утакан çыннăн питĕ тимлĕ пулмалла, çул-йĕр правилине çирĕп пăхăнмалла, çул урлă ятарлă вырăнта кăна каçмалла, пысăк тиев турттаракан машинăсем часах чарăнма пултарайманнине шута илмелле, водительсен те тимлĕхе çухатмалла мар.

**Район сучĕн пресс-служби.**